# Пурнăçланнă ĕмĕт

Хĕрлĕ Чутай районĕн аталанăвĕнче Юрий Николаевăн тӳпи те пысăк. Юрий Александрович çак тăрăха чылай вăхăт ертсе пынă. КПСС райкомĕн секретарĕ, райĕçтăвком председателĕ, район пуçлăхĕ пулма тӳр килнĕ ăна. Кирек хăçан та шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшнă вăл. Районта татса памалли ыйтусем пайтах пулнă. Ял хуçалăхне, вĕрентӳпе сывлăх сыхлавне аталантарасси, социаллă объектсем, такăр çул, çурт-йĕр тăвасси... – çăмăл çĕклем мар. Анчах вĕсене татса памасăр экономикăпа социаллă пурнăçа йĕркелеме йывăррине аван ăнланнă вăл.

Аякри ялсене такăр çул çитересси уйрăмах çивĕч ыйту. Штанаш, Турипе Анатри Çĕрпӳкасси тăрăхĕнчи çынсем пылчăк вăхăтĕнче сахал мар нушаланнă. Район центрĕнчен çирĕм çухрăм аякра пурăнакансен техника çӳременнипе час-часах çуран утма тивнĕ. Хĕлле вара çула юр хӳсе лартни тарăхтарнă. Ял совечĕсем, ку тăрăхри колхоз председателĕсем район канашлăвĕсенче çивĕч ыйтăва çине-çинех çĕклеме тытăннă. Ертӳçĕсем çине тăнипе лав вырăнтан тапраннă. 1983 çулта асфальт сарнă çул Штанаша çитнĕ. Кĕçех яла Хĕрлĕ Чутайпа Çĕмĕрлерен те автобуссем çӳреме пуçланă. Каярахпа Хусанушкăньпе Хурашаш, унтан Кĕрлев ялĕсенче пурăнакансем те сарă куна кĕтсе илчĕç.

Аякри ялсене такăр çул çитернишĕн савăнмалла пек. Анчах кĕçех çӳлте лараканскем патне çăхав



хыççăн çăхав вĕçме тытăннă. Хăшĕпĕри хĕрсех «çутă хĕвел çинче хура пăнчă» шырама пикеннĕ. Вĕсене пуçлăхсем пархатарлă ĕç тунăшăн укҫа илме пултарни канăç паман иккен. Çăхавçăсене пула çул тăвассишĕн тăрăшнă Ю. Николаевпа колхоз председателĕсем те шар тӳснĕ. Чăн та, кайран вĕсене тӳрре кăларнă-ха, çапах чĕре суранĕ яланлăхах юлнă.

«Марксист» колхоз председателĕ Иван Никифоров çăхавçăсене пула ĕçсĕр юлнă Юрий Александровича хăй çумне вырнаçтарать. Икĕ çул пĕр-пĕрне ăнланса вăй хураççĕ вĕсем. Çав хушăра Николаев Новочеркасскра мелиораторсен курсĕнче пĕлĕвне ӳстерет. Пултаруллă çынна кĕçех Коминтерн ячĕллĕ хуçалăха ертсе пыма шанаççĕ. Вăл ĕçленĕ тапхăрта, 1986-1990-мĕш çулсенче, колхоз палăрмаллах аталанса вăй илет. Экономика кăтартăвĕсене лайăхлатса пынипе пĕрлех ĕç çыннисене пурăнмалли çурт-йĕр çавăрса параççĕ. Ертӳçĕ хресчене пĕччене çурт-йĕр çĕклеме йывăррине аван ăнланнă. Çавăнпа май çитнĕ таран унăн пурнăçне çăмăллатма тăрăшнă.

90-мĕш çулсенче, иккĕмĕш хут райĕçтăвком председательне ларсан, унччен туса ĕлкĕреймен ĕçне малалла тăснă вăл. Кивĕ Атикассипе Анат Çĕрпӳкасси ялĕсене асфальт çулпа çыхăнтарнă. Кĕçех çынсем Элĕкпе Хĕрлĕ Чутай районĕсене те автобуспа тӳрремĕн çӳреме тытăннă. Тури Çĕрпӳкассине хăçан та пулин такăр çул çитессе нумайăшĕ ĕненмен те-тĕр. Хăй вăхăтĕнче кунта водительсем те самай нуша тӳснĕ. Шăтăк-путăк çул çинче техника ванса кайнипе уйрах çĕр каçни сахал пулнă-им?

Çул-йĕрпе çыхăннă татса паман ыйтусем халĕ те пур-ха. Çапах районăн çĕнĕ ертӳçисем çакна вĕçне çитерессе шанас килет. Юрий Александрович вара ĕмĕтне пурнăçлама, аякри ялсене такăр çул çитерме пултарнишĕн чун-чĕререн савăнать. Çакă уншăн пуçлăх пукане нĕнчен те хаклăрах. Çавăнпах-тăр вăл хăрамасăрах ĕмĕчĕ патне ăнтăлнă.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**